ПРИКАЗ № 9 о/д
по отделу образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики

с. Моргауши 16 января 2024 года

О II муниципальном фестивале-конкурсе чтецов стихотворений «Сӑмах хӑвачӗ»

В целях популяризации изучения чувашского языка и литературы, раскрытия богатства литературы на родном языке приказываю:

1. Провести 30 января 2024 года на базе МБОУ «Калайкасинская СОШ им. А.Г.Николаева» Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики II муниципальный фестиваль-конкурс чтецов стихотворений «Сӑмах хӑвачӗ» среди обучающихся общеобразовательных организаций Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики.

2. Утвердить:

- положение о II муниципальном фестивале-конкурсе «Сӑмах хӑвачӗ»;
- смету расходов на проведение II муниципального фестиваля-конкурса «Сӑмах хӑвачӗ».

3. Ответственность за подготовку, организованное проведение фестиваля-конкурса и контроль за исполнением приказа возложить на заведующего РИМЦ Ершову И.А.

Начальник отдела образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики З.Ю. Дипломатова

Приложение 1
к приказу отдела образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского муниципального округа Чувашской Республики
от 16 января 2024 года № 9 о/д

**«Сăмах хăвачĕ»**
**сăвă вулакансен II-мĕш фестиваль-конкурс**
**ПОЛОЖЕНИЙĔ**

## 1. Пĕтĕмĕшле калани

Муркаш муниципаллă округĕн вĕренӳ организацийĕсен хушшинче irttерекен «Сăмах хăвачĕ» сăвă вулакансен 2-мĕш фестиваль-конкурс (малалла – Фестиваль-конкурс) Чăваш Республикинчи Муркаш муниципаллă округĕн администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политикин, физкультурăпа спорт пайĕн мероприятисен планĕпе килĕшӳллĕ иртет.

Фесиваль-конкурс - пĕтĕмĕшле тĕп, вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенчи чăваш чĕлхипе литература предмечĕсене аталанма пулăшмалли, сăвă илемне туйма хăнăхмалли мел.

## 2. Тĕллевĕпе задачисем

**Тĕллевĕ**:

Чăваш чĕлхипе литература предмечĕсен пĕлтерĕшне ӳстересси, тăван сăмахлăх пуянлăхне уçса парасси.

**Фестиваль-конкурс задачисем:**

– сăвă вулас пахалăха ӳстересси;

– чăваш литературине вĕренекенсен пултарулăхне ӳстересси, сцена çинче хайсене тытма хăнăхтарасси;

– тĕрлĕ ӳсĕмри ачасене тăван халăх кун-çулĕпе, историйĕпе, йăли-йĕркипе таччăнрах çыхăнтарасси;

– ачасене тăван сăмах хăватне туйма вĕрентесси;

– сăвва илемлĕ вулама пултаракан вĕренекенсене тупса палăртасси, вĕсене малаллла аталанма майсем туса парасси;

– вĕрентекен-ача-ашшĕ-амăшĕ хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси.

## 3. Йĕркелекенĕ

3.1 Фестиваль-конкурса Чăваш Республикинчи Муркаш муниципаллă округĕн администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политикин, физкультурăпа спорт пайĕ йĕркелет.

3.2 Фестиваль-конкурс 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнче Муркаш муниципаллă округĕн А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта иртет.

Адрес: Муркаш муниципаллă округĕ, Калайкасси ялĕ, Çамрăксен урамĕ, 3-мĕш çурт (Моргаушский муниципальный округ, д. Калайкасы, ул. Молодежная, д.3)

## 4. Фестиваль-конкурса хутшăнакансем

Фестиваль-конкурса Муркаш муниципаллă округĕн пĕтĕмĕшле тĕп, вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенчи вĕренекенсем хутшăнаççĕ.

## 5. Фестиваль-конкурс йĕрки

5.1 Фестиваль-конкурса хутшăнассине *(1-мĕш хушса пани)* 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕччен kalai-vr@mail.ru e-mail çине ярса парса пĕлтермелле. Çыру килсен вĕрентекене Телеграмм мессенджерти «Сăмах хăвачĕ» чата кĕртеççĕ, унтах фестиваль-конкурспа çыхăннă пур ыйтусене сӳтсе яваççĕ.

5.2.1 Жюрисем валли заявкăпа пĕрле сăвă тексне е фото, е документ туса ярса памалла.

5.3 Фестиваль-конкурс 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 30-мĕшĕнче Муркаш муниципаллă округĕн А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта иртет. 9 сехет те 00 минутра пуçланать.

5.4 Конкурса хутшăнакансене ӳсĕмне кура 3 ушкăна уйăраççĕ:

- Кĕçĕн ӳсĕмри ачасем – 1-4 классем;
- Вăтам ӳсĕмри ачасем - 5-8 классем;
- Аслă ӳсĕмри ачасем – 9-11 классем.

5.5 Сăвă калас черет, ача ӳсемне кура тата заявка янă тăрăх йĕркеленет.

5.6 Кашни ушкăнра сăвă калама вăхăт уйăраççĕ:

- Кĕçĕн ӳсĕмри ачасем – 3 минутра мала мар;
- Вăтам ӳсĕмри ачасем – 4 минутран мала мар;
- Аслă ӳсĕмри ачасем – 5 минутран мала мар.

## 6. Фестиваль-конкурс секцийĕсем

- «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» - Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай сăввисене вуласси.
- «Муркаш сасси» - Муркаш районĕнче çуралнă поэтсен хайлавĕсене каласси е Муркаш районне, халăхне, паллă çыннисене халаллană сăвва вуласси.

## 7. Яваплăх

7.1 Фестиваль-конкурса пĕтĕмĕшле йĕркелесе ирттерессине А.Г.Николаев ячĕллĕ Калайкасси вăтам шкулĕ хăй çине илет.

## 8. Хаклав критерийĕсем

Сăвă вулакансене аяларах асăннă критерисемпе хаклĕç. Балсене хушса чи пултаруллисене палăртĕç.

1. Сăвва такăнмасăр тĕрĕс, сăмахсенчи пусăма пăсмасăр калани (0-3 балл)
2. Сăвва интонаципе килĕшӳллĕ, пунктуаци правилисене шута илсе, терĕс чарăнусем туса калама пĕлни (0-3 балл)
3. Шкул программинче çук сăвă, сцена çине сайра тухакан сăвă (оригинальность) (0-2 балл)
4. Сăвва калаканпа сăвă содержанийĕ тӳр килни; тумĕ, сăн-сăпачĕ, хушма япаласемпе усă курни (0-2 балл)
5. Сцена çинче ача хăйне тытма, залпа ĕçлени пĕлни. (0-2 балл)

## 9. Пĕтĕмлетӳ

9.1 Фестиваль-конкурс пĕтĕмлетĕвĕ тата çĕнтерӳçĕсене чыслани кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче А.Г.Николаев ячĕллĕ Калайкасси пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта пулса иртет.

9.2 Тупăшмалли самантсем пуласран тата жюри членĕсен ĕçне çăмăллатас тĕллевпе Фестиваль-конкурса туллин видео ӳкерсе пыраççĕ.

9.3 Жюри çĕнтерӳçĕсене сăвă хаклавĕн критерийĕсене *(8-мĕш пункт)* шута илсе палăртать, пĕтĕмлетĕве протокола çырать. Ăна жюри председателĕ е ун çумĕ алă пусса çирĕплетет.

9.4 Фестиваль-конкурс протоколĕсене хутшăнакансене кăтартмаççĕ. Фестиваль-конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем пирки апелляци йышăнмаççĕ.

9.5 Фестиваль-конкурса хутшăннисене пурне те сертификат параççĕ.

9.6 Çĕнтерӳçĕсене диплом парса хавхалантараççĕ. Кашни секцинче тата ушкăнра 3 вырăн палăртаççĕ. Фестиваль-конкурс çĕнтерӳçи ята пуринчен те ытларах балл пухнă чи ăста сăвă вулакан тивĕçет.

9.7 Фестиваль-конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе Муркаш муниципаллă округĕн администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политикин, физкультурăпа спорт пайĕн сайтĕнче http://www.obrazov-morgau.edu21.cap.ru е А.Г.Николаев ячĕллĕ Калайкасси пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул сайтĕнче http://www.kalai-morgau.edu21.cap.ru паллашма пулать.

## 10. Тăкаксемпе çыхăннă ыйтусем

10.1 Чыславпа çыхăннă тăкаксене Чăваш Республикинчи Муркаш муниципаллă округĕн А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулĕ хăй çине илет.

10.2 Фестиваль-конкурса хутшăнакансем çул укçи тата апатланупа çыхăннă тăкаксене хăйсем çине илеççĕ.

## 10. Çыхăну

- (83541) 62-0-75 - Муркаш муниципаллă округĕн администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политикин, физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалисчĕ Ершова Ирина Александровна
- (83541) 65-2-53 – Калайкасси шкул директорĕ Ершова Татьяна Аркадьевна
- 8-927-846-11-73 – директор çумĕ Портнова Эльвира Владимировна
- Фестиваль-конкурс программи улшăнма пултарать (2-мĕш хушса пани). Тĕплĕнрех шкул сайтĕнче пĕлме пулать http://www.kalai-morgau.edu21.cap.ru

*1-мĕш хушса пани*

**Муркаш муниципаллă округĕн вĕренӳ организацийĕсен хушшинче irttерекен «Сăмах хăвачĕ» сăвă вулакансен 2-мĕш фестиваль-конкурса хутшăнассине пĕлтерни**

| | | |
|---|---|---|
| **Шкул** | **Вĕренӳ учрежденийĕн чăвашла тулли ячĕ** | |
| | **Вĕренӳ учрежденийĕн вырăсла тулли ячĕ** | |
| **Вĕрентекен** | **Вĕрентекен тулли ячĕ** | |
| | **Кĕсье телефонĕ** | |
| | **Фестиваль положенийĕпе паллашнă, килĕшетĕп. Алă пусни.** | |
| | **Фестивальпе çыхăннă Телеграмм мессенджерти чата кĕртме ирĕк паратăп. Алă пусни.** | |
| **Конкурса хутшăнакан** | **Сăвă калакан ачан тулли ячĕ** | |
| | **Класс / ушкăн** | |
| | **Секци** | |
| | **Сăвă ячĕ, авторĕ** | |
| | **Сăввăн сăн ӳкерчĕкĕ е тексчĕ** | |

*2-мĕш хушса пани*

**«Сăмах хăвачĕ» сăвă вулакансен II-мĕш фестиваль-конкурс программи**

08:30 – 09:50 – хăнасене кĕтсе илни;
09:00 – 9:15 – фестиваль-конкурса уçни (акт залĕ);
09:20 – 12:30– фестиваль-конкурса irttерни (акт залĕ)
12:00 – 12:40 – апатлану;
13:00 – 14:00 – пĕтĕмлетӳ, чыслав (акт залĕ);
14:00 – хăнасене ăсатни.